28-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
МАРТ
27
ЫТЛАРИКУН
58(↑8(9) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 2-мĕш фронт ҫарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника ЗАХАРОВА

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн ҫарĕсем, Карпат тăрăхĕнчи сăртлă-вăрманлă йывăр условисенче тапăнса пырса, Чехословакири БАНСКА БИСТРИЦА хулине—ҫулсен паха узелне тата нимĕҫ оборонин вăйлă тĕрек летнĕ пунктне туртса илнĕ.

БАНСКА БИСТРИЦА хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче ҫаксем чапа тухнă: ЖМАЧЕНКО генерал-лейтенантăн, РУМЫНИ ҫарĕн корпусной генералĕн ДЭСКЭЛЕСКУН, РУМЯНЦЕВ генерал-майорăн, УМАНСКИЙ генерал-майорăн, ПИГИН полковникăн, ПЕВЗНЕР полковникăн, БОЧКОВ полковникăн, ЦАЛАЙ полковникăн, КАРНАЧЕВ полковникăн, АЛЕКСАНДРОВ майорăн, КОЗЛЯКОВСКИЙ майорăн, ТОКАРЕВ майорăн, ОВЕЧКИН майорăн, ДОЛЖЕНКО капитанăн ҫарĕсем; артиллери генерал-майорĕн КОРЕЦКИН, НОВГОРОДСКИЙ полковникăн, СМИРНОВ подполковникăн, ЛИТВИНЕНКО подполковникăн, ВАСИЛЕВСКИЙ подполковникăн, ГУБЕНКО подполковникăн, ЯРГИН подполковникăн, ГЛУШЕНКО майорăн, ЩЕРБИН майорăн артиллерисчĕсем; ТОКАРЕВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн КАМАНИНАН, САПРЫКИН полковникăн, СЕМЕНОВ полковникăн, СЕМЕНКО полковникăн летчикĕсем; инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн ПЕТРОВАН, БУДАРИН полковникăн саперĕсем; ГОРЕЛКИН полковникăн, ЛЯПИН подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕçсен тĕрĕслĕхе палăртса хăвăрас тесе, БАНСКА БИСТРИЦА хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 26-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, ҫĕрҫирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Украинăри 2-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, вăл шутра Румыни ҫарĕн корпусной генералĕн ДЭСКЭЛЕСКУН ҫарĕсене те, БАНСКА БИСТРИЦА хулине туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, БАНСКА БИСТРИЦА хулине ирĕкле кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питтĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Нимĕҫ захватчикĕсене хирĕҫ ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ ***И. СТАЛИН.***

1945 ҫулхи мартăн 26-мĕшĕ. № 310.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 3-мĕш фронт ҫарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне ТОЛБУХИНА
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-лейтенанта ИВАНОВА

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт ҫарĕсем, малалла тапăнса пырса, паян, мартăн 26-мĕшĕнче, ПАПА тата ДЕВЕЧЕР хулисене—ҫулсен пысăк узелĕсене тата нимĕҫсен оборонин Австри чиккисем патне пымалли ҫулсене хўтĕлесе тăракан вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене туртса илнĕ.

ПАПА тата ДЕВЕЧЕР хулисене туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче ҫаксем чапа тухнă: ГЛАГОЛЕВ генерал-полковникăн, МИРОНОВ генерал-лейтенантăн, ТИХОНОВ генерал-лейтенантăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал-майорăн, СЕРЕГИН генерал-майорăн, ДЕНИСЕНКО генерал-майорăн, ИВАНОВ генерал-майорăн, БОГДАНОВ генерал-майорăн, ЛАРИН полковникăн, СТЕПАНОВ полковникăн ҫарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-майорĕн КАРЛИНАН, артиллери генерал-майорĕн БРЕЖНЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ГУСЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ВЕЛИКОЛЕПОВАН, артиллери генерал-майорĕн ДАНЬШИНАН, ЖИВУЦКИЙ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй ҫарсен генерал-полковникĕн КРАВЧЕНКАН, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн ВОЛКОВАН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ПАВЕЛКИНАН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ШТРОМБЕРГАН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн САВЕЛЬЕВАН, МИХНО полковникăн, СЕЛЕЗНЕВ полковникăн, ВОРОНОВ полковникăн, ЖИЛИН полковникăн, БЕЛОГЛАЗОВ полковникăн, ОВЧАРОВ подполковникăн, ОБДАЛЕНКОВ полковникăн, САХАРОВ полковникăн, ОСТАПЕНКО полковникăн, САРОЧИНСКИЙ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТОЛСТИКОВАН, авиаци генерал-майорĕн ТИШЕНКАН, СМИРНОВ полковникăн, ИВАНОВ полковникăн, ТЕРЕХОВ полковникăн, ШАТИЛИН подполковникăн летчикĕсем; ВОДОВАТОВ полковникăн, ФАДЕЕВ полковникăн саперĕсем; ҫыхăну ҫарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВАН связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕçсен тĕрĕслĕхе палăртса хăварас тесе, ПАПА тата ДЕВЕЧЕР хулисене туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 26-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, ҫĕрҫирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, ҫўлерех асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ПАПА тата ДЕВЕЧЕР хулисене туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питтĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ ***И. СТАЛИН.***

1945 ҫулхи мартăн 26-мĕшĕ. №-311.

К. В. Иванова асăнса ирттернĕ вечер

Мартăн 24-мĕшĕнче Шупашкарти Пионерсен ҫуртĕнче чăваш литературин никĕсне хывакане, чăваш поэзийĕн классикĕ Константин Васильевич Иванов вилнĕренпе 30 ҫул тултарнă ятпа столицăри общественносăн пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухăва чăваш совет писателĕсен Союзĕн Правленийĕ председателĕн заместителĕ А. Эсхель юлташ уҫрĕ. Президиумра — парти Чăваш Обкомĕн секретарĕ М. А. Андреев, парти Чăваш Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕҫлекен секретарĕ А. С. Вишняков, парти Шупашкар хула комитечĕн секретарĕсем М. М. Романова, С. М. Ислюков, ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕ К. Е. Евлампьев, ЧАССР Совнаркомĕ ҫумĕнчи Искусство ĕҫĕсен Управленин начальникĕ А. Д. Калган, чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер юлташсем пулчĕҫ.

Поэтăн пурнăҫĕпе творчестви ҫинчен филологи наукисен кандидачĕ И. Н. Сутягин юлташ анлă доклад туса пачĕ.

Доклад хыҫҫăн Чăвашсен академиллĕ театрĕн артисчĕсем «Нарспи» пьесăн тăвата картинине кăтартрĕҫ.

АБАЙ КУНАНБАЕВ ҪУРАЛНАРАНПА 100 ҪУЛ ТУЛТАРАС УМЕН

Казахстанри организацисем Казах литературине пуҫласа яракан Абай Кунанбаев ҫуралнăранпа 100 ҫул тултарнине уявласа иртерме хатĕрленеҫҫĕ. Поэтăн тăван хулинче—Семипалатинскра—унăн ячĕпе музей уҫăлать. Казахстан композиторĕсем Брусиловский тата Жубанов Абайăн лирикăллă пĕр поэмин сăввисем тăрăх музыка ҫыраҫҫĕ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 24-мĕшĕнче ДАНЦИГ хули енче БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт ҫарĕсем ҫаплах наступлени туса пынă, ПРАУСТ хулине туртса илнĕ тата РОЗЕНБЕРГ, ЛАНГЕНАУ, ДИПЛАУ, ГИШКАУ, РОТТМАННСДОРФ, ШТРАШИН, ИЕНКАУ, БАНКАУ, ХОХ-КЕЛЬПИН, КЛАЙН-КЕЛЬПИН, ГОЛЬДКРУГ, ВИТТОМИН ялĕсене йышăннă. Мартăн 23-мĕшĕнче пулса иртнĕ ҫапăҫусенче фронт ҫарĕсем ҫав районра 1.000 нимĕҫ салтакĕпе офицерне ҫити тыткăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем, малалла наступлени туса пырса, мартăн 24-мĕшĕнче Силезире ОДЕР шывĕнчен хĕвеланăҫнерехре НЕЙССЕ хулипе ЛЕОБШЮТЦ хулине—нимĕҫсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата ГИСМАНСДОРФ, МИТЛЕР-НОЙЛАНД, ХАЙДАУ, ЛИНДЕВИЗЕ, ШНЕЛЛЕВАЛЬДЕ ялĕсене йышăннă.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт ҫарĕсем, БУДАПЕШТРАН кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре нимĕҫсен вунпĕр танковăй дивизийĕн атакисене сирсе ярса тата оборонăра тăрса ҫапăҫса вĕсене халран кăларнă хыҫҫăн наступлени пуҫласа янă та нимĕҫ танкĕсен ушкăнне аркатса тăкнă, 100 километр ытла сарлакĕш фронтпа 70 километр малалла кайнă.

Наступлени туса пырса, пирĕн ҫарсем СЕКЕШФЕХЕРВАР, МОР, ЗИРЕЗ, ВЕСПРЕМ, ЭНЬИНГ хулисене туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 350 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ВЕРТЕШКЕТХЕЛЬ, РЕДЕ, БАКОНЬСЕНТЛАСЛО, ЧЕСНЭК, МАРКО, СЕНТКИРАЛЬСАБАДЬЯ, БАЛАТОНАЛМАДЬ, БАЛАТОНКЕНЕШЕ ятлă пысăк ялсем.

Унти ҫапăҫусенче фронт ҫарĕсем тăшманăн 6.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, 745 танкпа хăй тĕллĕн ҫўрекен тупă, 800 тупă ытла тата ытти хĕҫпăшалпа ҫар пурлăхĕ нумай пĕтерсе тăкнă е тытса илнĕ. Тăшманăн, вилнисене кăна шута илсен те, 70.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

Тăшманăн вунпĕр танковăй дивизийĕ шутĕнче нимĕҫсен хĕвеланăҫ фронтĕнчен куҫарса килнĕ 6-мĕш СС танковăй армине кĕрекен тăватă танковăй дивизине аркатса тăкнă.

Мартăн 22-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 204 танкĕпе хăй тĕллĕн ҫўрекен туппине ҫĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 107 самолетне персе ўкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЧЕХОСЛОВАКИРИ МОРАВСКА ОСТРАВА ЧУГУН ҪУЛ УЗЕЛНЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

Мартăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле пирĕн йывăр бомбардировщиксем Чехословакири Моравска Острава чугун ҫул узелне пырса ҫапнă. Бомбăсем пырса пăрахнине пула, узел территорийĕнче пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

☆ ☆ ☆

ХĔРЛĔ ЯЛАВЛĂ БАЛТИКА ФЛОЧĔН АВИАЦИЙĔ НИМĔҪ ТРАНСПОРЧĔСЕНЕ ПЫРСА ҪАПНИ

Мартăн 22-мĕшĕнче Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ нимĕҫсен Данциг, Гдыня тата Пиллау порчĕсен районĕнче тăракан транспорчĕсене пырса ҫапнă. Бомбăсем пăрахнине пула, Данциг тата Гдыня порчĕсен районĕнче нимĕҫсен пĕтĕмĕшпе 34.000 тонна таякан 6 транспорчĕ тата хуралта ҫўрекен 2 карапĕ шыва путнă. Пиллау портĕнче 3.000 тонна таякан пĕр транспорт путнă.

МАРТĂН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт ҫарĕсем, малалла наступлени туса пырса, мартăн 25-мĕшĕнче ХАЙЛИГЕНБАЙЛЬ хулине — нимĕҫсен КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехри ФРИШ ГАФ заливĕ хĕрринчи оборонин тĕреклетнĕ юлашки пунктне—туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата ПАРТАЙНЕН, РЕМЗЕГУТ, КАЙМКАЛЛЕН, БРЕГДЕН, ШТАЙНДОРФ, КАРБЕН, ПРЕЙСИШ БАНАУ, ШЕТТНИЕНЕН, ГЕРЛАКСДОРФ, РААДЕ, ЛЕЙЗУНЕН, БЮСТЕРВАЛЬДЕ, РАУНЕНБЕРГ ялĕсене йышăннă. Мартăн 24-мĕшĕпе 25-мĕшĕнче пулса иртнĕ ҫапăҫусенче ку районра фронт ҫарĕсем 9.000 нимĕҫ салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата ҫакăн пек трофейсем тытса илнĕ; самолетсем—109, танксемпе хăй тĕллĕн ҫўрекен тупăсем—65, тупăсем—245, пулеметсем—176, автомашинăсем — 3.330, бронетранспортерсем—69.

ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) хули енче пирĕн ҫарсем, тăшман хирĕҫ тăнине ҫĕнтерсе пырса, ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) хулипе пĕрлешсе ларнă ОЛИВА ялне туртса илнĕ тата БОРГФЕЛЬД, КОВАЛЛ, КАРЧЕМКЕ, КЛАЙН КАЦ, ЛИТТОМИН ялĕсене йышăннă. Мартăн 24-мĕшĕнче ку районра пирĕн ҫарсем 1.000 нимĕҫ салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт ҫарĕсем, наступлени пуҫласа пырса, БУДАПЕШТ хулинчен хĕвеланăҫнерехре нимĕҫсен ВЭРТЭШХЕДЬШЭГ тăвĕсем ҫинчи вăйлă оборонине татнă та, ЕСТЕРГОМ хули районĕнче нимĕҫ ҫарĕсен ушкăнне аркатса тăкса, 45 километр малалла кайнă.

Наступлени туса пырса, фронт ҫарĕсем ЕСТЕРГОМ, НЕСМЕЙ, ФЕЛЬШЕ-ГАЛЛА, ТАТ хулисене туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 20 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ТОКОД, ТАТ, БАЙСТ, ТАВАРОШ, ТАТАБАНЬЯ, БАНХИДА, КЕРНЬЕ, ДУНААЛЬМАШ, НАСАЙ, МОЧЕ, КОЧ, СЕНД, ЧАСАР ятлă пысăк ялсем.

Ҫав ҫапăҫусенче пирĕн ҫарсем тăшманăн 7.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ, 250 танкпа хăй тĕллĕн ҫўрекен тупă, 300 тупă ытла тата ытти хĕҫпăшалпа ҫар пурлăхĕ нумай пĕтерсе тăкнă е тытса илнĕ.

БАЛАТОН кўллинчен ҫурҫĕртерехре пирĕн ҫарсем малалла наступлени туса пынă, ВАРОШЛЕД хулипе чугун ҫул станцине туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ПАПАТЕСЕР, БАКОНЬКОППАНЬ, ТАПОЛЬЦАФЕ, БАКОНЬЯКО, МАДЬЯРПОЛАНЬ, СЕНТГАЛ, ТОТВАЖОНЬ, БАЛАТОН-ФЮРЕД, ФЮРДЕТЕЛЕП ятлă пысăк ялсем.

Мартăн 24-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 147 танкĕпе хăй тĕллĕн ҫўрекен туппине ҫĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 63 самолетне персе ўкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) ХУЛИПЕ ПИЛЛАУ ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

Мартăн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле пирĕн йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Гданьск (Данциг) хулинчипе Пиллау хулинчи вăрҫă объекчĕсене пырса ҫапнă.

Бомбăсем пăрахнине пула, Гданьск (Данциг) чугун ҫул узелĕнче тата портра 50 пушар ытла тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Пиллау портĕнче темиҫе пушар тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

☆ ☆ ☆

Белоруссири 3-мĕш фронт ҫарĕсем тăшманăн Фриш Гаф заливĕ хĕрринчи ҫарĕсен ушкăнне пĕтерсе тăкасшăн ăнăҫлăн ҫапăҫнă. Нимĕҫсем хаяррăн хирĕҫ тăраҫҫĕ. Тыткăна лекнисем каласа кăтартнă тăрăх, нимĕҫсен командованийĕ, хăйсен чаҫĕсене лайăхрах вăрҫтарас тесе, тĕрлĕрен чрезвычайнăй мерăсем йышăннă. Тупă расчечĕсене нумайĕшне офицерсенчен тунă. Пехота подразделенийĕсен хыҫне эсэсовецсен заградительнăй отрячĕсене тăратнă. Ҫав отрядсем малти позицирен чакма хăтланакан салтаксене е тыткăна парăнма хăтланакансене ҫавăнтах персе пăрахаҫҫĕ.

* * *

Пирĕн ҫарсем, тăшман хирĕҫ тăнине ҫĕнтере-ҫĕнтере, ҫине тăрсах малалла куҫса пыраҫҫĕ. Хайлигенбайль хулинче хаяр ҫапăҫусем пулса иртнĕ. Нимĕҫсем ку хулари кашни ҫурта оборона валли хатĕрленĕ, подвалсенчен, чардаксенчен вăйлă персе тăнă. Тупăсем парса вăйлатнă штурмлакан ушкăнсем тăшмана хулан кăнтăр-хĕвелтухăҫ пайĕнчи чугун ҫул станцийĕпе завод территорийĕнчен хăваласа кăларнă. Завод корпусĕнче авиаци валли хатĕрленĕ 134 мотор тытса илнĕ. Гитлеровецсенчен квартал хыҫҫăн квартал тасатса пырса, паян пирĕн ҫарсем хулан ҫурҫĕр хĕррине тухнă та нимĕҫсен оборонин Фриш Гаф заливĕ хĕрринчи тĕреклетнĕ юлашки пунктне — Хайлигенбайль хулине—пĕтĕмĕшпех туртса илнĕ. Пирĕн ытти чаҫсем Пассарге шывĕпе Банау шывĕ хушшинчи района тăшмантан тасатнă, темиҫе ял туртса илнĕ. Тыткăна парăнакан нимĕҫсен хисепĕ пĕрмаях ўссе пырать.

* * *

Гданьск (Данциг) хули енче пирĕн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынă. Гданьск (Данциг) хулинчен хĕвеланăҫнерехре совет чаҫĕсем тĕрехлетнĕ районăн шалти позицийĕсем патне пырса тухнă. Пирĕн Данциг бухти хĕррипе наступлени туса пыракан пехотинецсем, танксене чарма тунă канавсем урлă каҫа-каҫа, хăвăрттăн малалла куҫса пынă. Глетткау шывĕ ҫинчи кĕперсене юсавлăн тытса илнĕ. Вара ҫав кĕперсем урлă ҫавăнтах пирĕн танксемпе артиллери каҫса кайнă. Тăшмана хыҫҫăнах хăваласа пырса, совет пехотинецĕсемпе танкистсем Гданьск (Данциг) хулипе пĕрлешсе ларнă Олива ялне вăркăнса кĕрсе кайнă. Хаяррăн ҫапăҫнă хыҫҫăн ҫав Гданьск хулинчен виҫĕ километр ҫурҫĕртерехре ларакан яла пирĕн ҫарсем тытса илнĕ. Гдыня хулине пырса кĕмелли вырăнсенче совет чаҫĕсем тăшманăн нумай контратакисене сире-сире янă, Клайн Катц поселокне туртса илнĕ. Ҫапăҫу хирĕсенче нимĕҫ салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем купаланса выртаҫҫĕ. Кун каҫиччен 17 танк, 52 тупă, 58 миномет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем трофейсем тытса илнĕ, вăл шутра—5 танк, 6 чугун ҫул эшелонĕ тата тĕрлĕрен ҫар хатĕрĕсем тиенĕ 600 вагон ытла.

Совет летчикĕсем Данциг бухтинче нимĕҫсен хăй тĕллĕн ҫўрекен 6 десант баржине, 2 катерне тата ытти судниссене те шыва путарнă. Тăшманăн пĕр ҫар карапĕ ҫине бомбăсем тўрех пырса ўкнĕ.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт ҫарĕсем наступлени пуҫласа янă. Советсен пехота чаҫĕсем, артиллерипе авиаци пулăшса пынипе, тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ оборонине татнă. Будапешт хулинчен хĕвеланăҫнерехри вăрманлă Вэртэшхедьшэг тăвĕсем ҫинчи ҫулсем ҫинче нимĕҫсем йывăҫ нумай купала-купала хунă. Иртсе ҫўреме май пур участоксем ҫинче вĕсем танксене чармашкăн канавсем чавса тултарнă, пур ҫĕрте те минăсем лартса пĕтернĕ. Пирĕн сапер подразделенийĕсем хушса парса вăйлатнă чаҫсем тусем урлă каҫса кайнă та тўрем вырăна тухнă. Тăшманăн Алтал шывĕн хĕвеланăҫ хĕрринче иккĕмĕш оборона позицийĕсем пулнă. Ҫав позицисемпе усă курса, гитлеровецсем пирĕн ҫарсене малалла кайма чарма хăтланнă. Анчах та пирĕн пехотинецсем артиллери пулăшса пынипе Алтал шывĕ урлă каҫнă та ҫав позицисене туртса илнĕ. Совет чаҫĕсем ҫав тери хăвăрт пырса ҫапнине тўсеймен нимĕҫсем, хăйсен мĕнпур хĕҫпăшалне пăрахса, ним йĕркисĕр-паллисĕр каялла чакнă. Тăшмана хăваласа пырса, фронт ҫарĕсем венгерсен Тата ятлă промышленноҫлă хуличе штурмласа туртса илнĕ. Дунай шывĕн кăнтăр хĕррине тухса, Естергом хулипе Комарно хули хушшинчи чугун ҫула татнă. Ҫапла вара, Естергом хули районĕнчи нимĕҫ ҫарĕсен ушкăнне Дунай шывĕ хĕррине хĕстерсе лартнă. Тăшмана пур енчен те хĕстерсе пырса, пирĕн ҫарсем нимĕҫсен оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăракан Естергом хулине туртса илнĕ. Пирĕн ҫарсем, ҫав тери хăвăрт тапăнса пырса, тăшманăн Естергом патĕнчи ушкăнĕн юлашкийĕсене шыв хĕрринчи ансăр ҫĕре хĕстерсе лартнă. Ҫав участокра пирĕн артиллери урлах персе тăрать. Нимĕҫсем Дунай шывĕн ҫурҫĕр енне каҫса тарма хăтланаҫҫĕ. Совет летчикĕсем тăшман каҫакан вырăнсене вĕҫĕмсĕр пыра-пыра ҫапаҫҫĕ, вĕсен кимĕсене, суллисене тата понтонĕсене шыва путараҫҫĕ. Гитлеровецсем шыва путса нумай пĕтнĕ.

* * *

Балатон кўллинчен ҫурҫĕртерехре пирĕн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынă. Совет чаҫĕсем 20 километр малалла кайнă та тăшманпа Варошлед хулишĕн ҫапăҫма тытăннă. Хулана пырса кĕмелли вырăнсенче тăшман хăйĕн пысăк вăйĕсене пухса тăратнă, хытă хирĕҫ тăрса ҫапăҫнă. Пирĕн ҫарсем, нимĕҫ танкĕсен контратакисене сире-сире ярса, Варошлед хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та ăна туртса илнĕ. Пысăк ҫар склачĕсем, паровозсем тата ҫар хатĕрĕсем тиенĕ вагонсем нумай тытса илнĕ. Кун каҫиччен тăшманăн 64 танкне тата 12 бронетранспортерне ҫунтарса янă е персе ҫĕмĕрнĕ.

СТАЛИНГРАДРИ АВТОМАТЛА ТЕЛЕФОН СТАНЦИЙĔ

Сталинградра хулари 1.000 номерлĕ автоматла телефон станцийĕ ĕҫлеме пуҫланă. Ҫĕнĕ телефон линийĕсем хале Сталинград хĕррисене центрпа ҫыхăнтараҫҫĕ. (ТАСС).

ПУШКИН ХУЛИНЕ ЮСАНИ

Ленинградри ĕҫҫынни депутачĕсен Совечĕн Исполкомĕ Пушкин хулине юсаса урăхлатмалли генеральнăй проекта ҫирĕплетнĕ. Ҫав проекта архитектура академийĕн член-корреспонденчĕ Е. А. Левинсон мастерскойĕнче туса хатĕрленĕ.

Генеральнăй проект тăрăх, икĕ хутлă ҫуртсем нумай тума, йывăҫсем нумай лартма, Екатеринински тата Александровски парксене юсама паллă туса хунă. (ТАСС).

СУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНЕР!

Колхозсем пĕр-пĕрне вăрлăхлăх тырă парса пулăшаҫҫĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, мартăн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри малта пыракан колхозсем вăрлăх ҫитмен колхозсене хăйсен ытлашши тыррине парса пулăшаҫҫĕ. «Агроном», Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем ҫав шутпа кашниех 180-шар пăт тырă пама уйăрнă. «Путь социализма» колхоз 120 пăт, «Радио» колхоз 90 пăт панă. Вăрлăх ҫитмен колхозсене пулăшма районри колхозсем паянхи кун тĕлне 1500 пăт ытла тырă уйăрнă.

П. ТИХОНОВ.

Ҫуракине пур колхозсен те тĕплĕн хатĕрленмелле

СЕНТЕРВĂРРИ. Шуршăл ял Советне кĕрекен «Социализм», «Красная Армия», «Новая деревня», «Власть труда», «14 лет Чувашии», «17 партсъезд» колхозсем ҫуракине тухма пур енчен те хатĕрленсе ҫитнĕ. Ку колхозсенче вăрлăхсене ҫителĕклĕ таран хывнă, сортласа хунă, вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ. Ялхуҫалăх машинисене, урапасемпе ут таврашĕсене пурне те ҫителĕклĕ таран юсанă. Хĕлехи вăхăтра хире тислĕк кăлармалли, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли плана тултарнă.

Районĕпе мĕн пурĕ 92.392 лав тислĕк кăларнă, 1.747 центнер кĕл, 1206 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хунă. 896 плуг, 67 сеялка, 613 сўре тата 599 урапа юсаса лартнă.

Анчах районри хăш-пĕр колхозсем ҫуракине хатĕрленес тĕлĕшпе питех те ҫителĕксĕр ĕҫлеҫҫĕ-ха. Упакасси ял Советне кĕрекен «Трактор», Турханкасси ял Советне кĕрекен «Верный путь», «Осоавиахим» тата Урицкий ячĕпе тăракан колхозсенче ĕҫ уйрăмах сўрĕк пырать. Ҫав колхозсенче вăрлăхсене ҫителĕклĕ таран хывса ҫитермен, сортласа тасатман тата шăтас пахалăхне тĕрĕслесе пăхман. Ялхуҫалăх машинисемпе ут таврашĕсене те юсаса хатĕрлемен.

Ҫураки вăхăчĕ кунран-кунах ҫывхарса килет. Ҫавăнпа та мĕнпур колхозсен ҫуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕҫлемелле.

И. ОСИПОВ.

Ҫураки планне туса хатĕрленĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Тимошенко ячĕпе тăракан колхоз ҫуракине тухма хатĕрленсе ҫитрĕ.

Вăрлăхсене ҫителĕклĕ таран хатĕрлесе, сортласа тасатнă, лабораторинче тĕрĕсленĕ, кондицие лартнă. Ялхуҫалăх машинисемпе ут таврашĕсем ҫителĕклĕ те юсавлă.

Хире тислĕк планпа пăхнинчен ирттерсе кăларнă, выранти удобренисене чылай пухнă. Кашни колхозник киленĕнчен хире 20—30 лав тислĕк тăкнă.

Ҫуракине ирттермелли ĕç планне туса вăл колхозниксен пухăвĕнче сўтсе-явса ҫирĕплетнĕ. Ҫуракине тăштырăсем акас енĕпе 7 ĕç кунĕнче вĕҫлеме йышăннă. Колхозниксем ҫураки вăхăтĕнче кăм ăçта, мĕн ĕҫлемеллине лайăх пĕлсе тăраҫҫĕ. Лашасем колхозра лайăх ўт-пўллĕ те самăр, вĕсем валли ҫителĕклĕ апат-ҫимĕҫ пур.

С. РУМЯНЦЕВ.

Ватă колхозниксем те ĕҫре

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Ямайкасси ял Советне кĕрекен «Большевик» колхозра ҫуракине хатĕрленес ĕҫ хĕрўллĕ пырать. Ҫак ĕҫе ватă ҫынсем те активлăн хутшăнса ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем урапасем, сўресем, сўре туртисем юсаҫҫĕ. Ку ĕҫре уйрăмах 60 ҫулхи ватă колхозник П. Егоров палăрса тăрать. Кулленхи ĕҫе пĕтĕҫтернĕ хыҫҫăн П. Егоров нормăна 120—180 процент тултарса пыни куранчĕ. Ватă ҫынсене комсомолец П. Иванов Хĕрлĕ Ҫарăн фронтри паха ĕҫĕсем ҫинчен хаҫатра тухнă эпизодсене вуласа парать.

Г. ЗАХАРОВ.

Чи лайăх ҫамрăк садоводсен ăмăртăвĕ

Ҫамрăк натуралистсен Тĕп станцийĕ пĕр ҫул каярах чи лайăх ҫамрăк садоводсен ăмăртăвне организацилерĕччĕ. Ҫав ăмăрту халь вĕҫленнĕ. Ăмăртăва 36.000 ытла пионерпа шкул ачи, 1.400 шкул, ача ҫуртĕсем тата ытти учрежденисем хутшăннă. Вĕренекен ачасем ҫимĕҫ паракан темиҫе вунă пин йывăҫ тата ҫырла йывăҫĕсем лартнă. Мускав облаҫĕнче—25.000 йывăҫ тата 50.000 тĕп улмуҫҫисем, Омск облаҫĕнче—20.000 ытла йывăҫ лартнă тата ытти те.

Пĕрремĕш премисене ҫаксене панă: Молотов хулинчи 54-мĕш номер спецшкула, Чăваш АССР-ĕнчи Тойкилтри шкула, Омск облаҫĕнчи Москаленски шкула, Калинин облаҫĕнчи Брылинри шкула тата Алтай крайĕнчи Екатеринински шкула панă. 2-мĕш премисене 10 шкула, 3-мĕш премисене 30 шкула панă. (ТАСС).

Заем вылявĕ

Мускавра 3-мĕш Пятилетка Заемĕн (вунçĕмĕш ҫулхи кăларăмĕн) 17-мĕш вылявĕ пулса иртнĕ.

Вылявра 134.743.200 тенкĕлĕх 846.400 выигрыш пулнă. (ТАСС).

Укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатмалла

Республикăра укçа-тенкĕ пухас ĕç çителĕксĕр пырать. Лайăх ĕçлес пулсан, 1-мĕш квартал планне халиччен тултармаллаччĕ. Анчах мартăн 16-мĕшĕ тĕлне плана 64,7 процент çеç тултарнă. Март уйăхĕн малтанхи çурринче 20 миллион тенкĕ пухмалла пулнă пулсан, 13 миллион тенкĕ кăна пухнă.

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Куславкка районĕ лайăх ĕçлет. Пĕрремĕш кварталти плана вăл 98,5 процент тултарнă. Март уйăхĕн малтанхи 15 кунĕнче 533 пин тенкĕ укçа пухнă. Елчĕк районĕнче 539 пин тенкĕ пухнă. Юлашки вăхăтра çак ĕçе Калинино, Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Элĕк, Çĕрпӳ, Октябрьски тата Вăрнар районĕсем те вăйлатрĕç.

Анчах та чылай районсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕ 1-мĕш кварталти финанс планне 28,5 процент кăна тултарнă. Мартăн малтанхи çуррине кунта 144 пин тенкĕ пухнă (график тăрăх 700 пин тенкĕ пухмалла пулнă). Районра иртнĕ çулхи налог парăмĕсем 1.700.000 тенкĕ шутланаççĕ. Анчах та çакă район руководителĕсене нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармасть пулмалла. Вĕсем государство умĕнче пысăк парăма кĕнине хăнăхнă, укçа-тенкĕ пухас ĕç хăй тĕллĕнех пулса пырасса шанса лараççĕ. Финанс работникĕсем ĕçе вăйлатас тесе нимĕнех те тумаççĕ.

Çавăн пирки районта ял Совечĕсен бюджечĕсен тупăшĕсем пурнăçа кĕрсе пымаççĕ, шкулсемпе больницăсене, ача сачĕсемпе яслисене, вулав çурчĕсене укçа-тенкĕ йĕркеллĕн парса тăраймаççĕ, хăшпĕр служащисене темиçе уйăх хушши ĕçукçи тӳлеймеççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнче укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле пыни çинчен сӳтсе-явса, райфо заведующине Сорокина ĕçрен кăларса суда пама йышăнчĕ, райсовет исполкомĕн председательне Захаров юлташа выговор пачĕ.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçе Кувакино, Комсомольски, Сĕнтĕр, Чкаловски, Чурачăк, Первомайски, Шăмăршă, Шупашкар, Етĕрне, Тăвай, Шăхасан, Пăрачкав тата Канаш районĕсенче те хакламаççĕ. Вĕсем 1-мĕш кварталти финанс планне 31—55-шер процент çеç тултарнă.

Асăннă районсенчи финанас пайĕсен заведующийĕсем, районсемпе ял Совечĕсен исполкомĕсем мĕнпур финанс работникĕсене, активистсене укçа-тенкĕ пухас ĕçе активлăн хутшăнтарма тивĕçлĕ. Ĕçсыннисем хушшинчи массăллă ăнлантару ĕçне татах та вăйлатмалла, укçа-тенкĕ парăмĕсене срокра татма кирли çинчен кашни колхозникке, единоличникке ăнлантарса памалла. Налог парăмĕсене сăлтавсăрах тӳлемен çынсем тĕлĕшпе законлă мерăсем йышăнмалла.

Укçа-тенкĕ енĕпе пирĕн республика государство умĕнче пысăк парăмра. Çак парăмран пирĕн тухмалла. Мĕнпур финанс работникĕсем тăрăшса ĕçлени, партипе совет органĕсем вĕсене ĕçре пулăшса пыни кирлĕ.

И. ЗОЛОТНИКОВ,
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Шыв çулĕ уçăлас умĕн

Иртнĕ çулта Шупашкар пристанĕ начар мар ĕçлерĕ темелле. Пысăк кимĕсемпе тавар турттармалли плана тоннаж енĕпе 118 процент, тонна-километр енĕпе 162 процент тултарчĕ.

Плана иртерсе тултарнă пулин те, пристань коллективĕн ĕçĕнче ситменлĕхсем пулман мар. Тури Атăл пароходствин баржисем хăшпĕр чух темиçешер талăк ахаль ларни пулнă. Çакă вăл вĕсем çине тавар тиеме тивĕçлĕ организацисенчен килнĕ. Заготзерпон Шупашкарти пункчĕ, Главчерметăн Чăваш республикинчи конторри, Чăвашсоюз, Чебторг, çăкăр комбиначĕ хăйсен таварĕсене тиеме е пушатма ĕç вăйĕ вăхăтра паман пирки, кимĕсем 3—4-шар талăк ахаль ларнă. Простойсем тунăшăн, сăмахран, Заготзернон Шупашкарти конторине 80 пин тенкĕ штраф тӳлеттернĕ.

Республикăри вырăнти тата вăрман промышленноçĕсен хăшпĕр предприятийĕсем хăйсен таварĕсене вăхăтра пушатса тиемен пирки, пристань тытакан пысăк кимĕсем те ахаль ларни пулнă.

Иртнĕ çулта пристаньре таварсем тытмалли склад çукки ĕçре пысăк чăрмавсем кӳчĕ. Апла пулин те, хăшпĕр организацисем хăйсен таварĕсене вăхăтра турттарса кайма тăрăшмарĕç. Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводăн материалĕсем, иртнĕ çулта турттарса килнĕскерсем, халĕ те пристань территорийĕнчех выртаççĕ.

Кăçал пирĕн иртнĕ çулхи çитменлĕхсене тумалла мар. Кăçал лайăх ĕçлес тесен, шыв çулĕ уçăличчен тивĕçлипе кĕтсе илес пулать.

Кăçалхи навигаци вăхăтĕнче грузсем турттармалли договорсене мартăн 15-мĕшĕччен туса пĕтермеллеччĕ. Хăшпĕр организацисем çак ĕçе хакламан пирки халичченех те договорсем тумарĕç. Вĕсен шутне Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод, Атăл леш енчи вăрманпромхоз кĕреççĕ.

Иртнĕ çулхи навигаци хупăннă хыççăн пристань коллективĕ хăйĕн пысăк киммисене юсама тытăнчĕ. Çак ĕçе вăхăтра тăвас тĕлĕшпе вăл Чикме пристанĕн тата Чăваш республикинчи ытти пристаньсен коллективĕсене социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ. Кимĕсене мартăн 10-мĕшĕччен юсаса çитерме обязательство илчĕ.

Пирĕн коллектив хăйĕн обязательствине пурнăçласа пырать. 16 пысăк кимĕрен 9-ĕшне отлично пахалăхпа, 7-ĕшне лайăх пахалăхпа юсанă. Çавăн пекех 4 газоходран 2-ĕшне тĕплĕн юсаса çитернĕ, тепĕр иккĕшне юсас ĕç вĕçленсе пырать.

Кимĕсемпе газоходсене юсанă çĕрте А. Скрябин, А. Стремин, А. Григорьев, Н. Семяхин плотниксем, Журавлев, Кондратьев тата Бемсонов механиксем тухăçлă ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен кулленхи нормисене 130—140-шер процент тултарса пыраççĕ.

Анчах та Ильникăпа Куславкка хушшинче çӳрекен «Газовец» ятлă теплохода срокра юсама пулмарĕ. Мĕншĕн тесен Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод теплоходăн хăшпĕр пайĕсене договорпа килĕшнĕ срокра хатĕрлесе памарĕ.

Пристань коллективĕ умĕнче Атăл пăрĕ кайнă вăхăтра кимĕсемпе газоходсене сыхласа хăварас задача тăрать. Ку тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пирĕн вăраха хăвармалла мар.

Чăваш республики 25 çул тултарнă кун çывхарса килет. Çак чаплă куна пирĕн пристань коллективĕн те ĕçре çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илмелле. Атăл хĕррине культурăллă сăн-сăпат кĕртес пулать. Эпир хуларан Атăл хĕрне анма çĕнĕ пусма тăватпăр, икĕ пристань хушшинче хăмаран утмаçул хыватпăр, сыран хĕррине чечексем лартатпăр. Таварсем тытма çĕнĕрен икĕ склад тумалла.

Пристань çинче ĕçлекенсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе кулленех туса пыма тăрăшатпăр. Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа Сталин юлташ панă приказа пристань коллективне ăнлантарса панă. Приказ çине ответлесе, пирĕн коллектив кăçалхи шыв çулĕ пуçланнине тивĕçлипе кĕтсе илет.

М. ИВАНОВ,
Пристаньри профком председателĕ.

ПЕРЛЕШУЛЛЕ МУНЧА

Етĕрне районĕнчи Палтайри Буденный ячĕпе тăракан колхозра колхозниксем валли пĕрлешӳллĕ мунча туса пĕтернĕ. Мунчи таса та çутă, ун çывăхĕнчех шыв пур.

Парти пурнăçĕ

УЧРЕЖДЕНИ ÇУМĔНЧИ ПУÇЛАМĔШ ПАРТОРГАНИЗАЦИ ÇИНЧЕН

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (Хамăр корр.). Учреждени çумĕнчи пуçламĕш парторганизацин ĕçĕнче хăйне май уйрăмлăхсем пур. Вĕсен задачи—аппарата сехет пек, тикĕс ĕçлекен тăвасси пулса тăрать.

Çак тĕлĕшпе партин райсовет исполкомĕ çумĕнчи пуçламĕш организацийĕ мĕнле ĕçлет-ха? Кунти пуçламĕш парторганизацинче 14 коммунист, вĕсенчен чылайĕшĕсем тĕрлĕ отделсенче ĕçлеççĕ. Коммунистсем тĕрлĕ органсенче ĕçлени, паллах, пуçламĕш парторганизацин ĕçне йывăрлатать, унăн ответлăхне татах та ӳстерет.

Партин райсовет исполкомĕ çумĕнчи пуçламĕш организацийĕ пур отделсен ĕçĕпе çителĕклĕ интересленмест-ха. Çавна пула ĕнтĕ хăшпĕр отделсенче ĕçлекенсен ĕç дисциплинийĕ тивĕçлĕ вырăнта мар. Райçĕрĕç пайĕ çумĕнчи комсомолăн пуçламĕш организацийĕ нимĕн те ĕçлемест, ăна парторганизаци пулăшни çук. Кашни отделта тенĕ пекех профсоюзăн вырăнти комитечĕсем пур, анчах вĕсене пуçламĕш парторганизаци çителĕклĕ таран ертсе пымасть. Профсоюз членĕсен пухăвĕсем сайра хутра çеç пулса иртеççĕ.

Учрежденисенче халĕ çамрăк кадрсем ĕçлеççĕ. Вĕсене ĕçре пулăшасси парторганизацин тивĕçĕ пулса тăрать. Çак енĕпе райсовет исполкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци хăшпĕр утăмсем тунă. Коммунистсен пухăвĕнче ĕçлекенсен производствăллă пĕлĕвне ӳстересси çинчен ятарласа ыйту лартнă. Çакă вăл паллах, администраци пысăк пулăшу пани пулать.

Коммунистсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Пуçламĕш парторганизацинчи коммунистсенчен касхине вĕренмелли парти шкулне 6 çын тата политшкула 2 çын çӳремелле, анчах вĕсенчен чылайĕшĕ занятисене йĕркеллĕ çӳремеççĕ. ВКП(б) членĕсем П. Сорокин, А. Михайлова юлташсем 30-шар сехет ытла сиктернĕ. Коммунист М. Кунин юлташ занятисене пачах çӳремест. Çамрăк коммунистсене воспитани парасси те тивĕçлĕ вырăнта мар. Иртнĕ çулта мĕнпурĕ 3 çынна парти кандидачĕсен ретне илнĕ, анчах вĕсемпе уйрăм калаçусем иртермен.

Коммунистсен пухăвĕсем вăхăтра пулса пымаççĕ. Хăшпĕр чухне коммунистсен пухăвĕсем палăртнă вăхăтра пулмаççĕ, коммунистсем пухăнман пирки пухăва тепĕр срока хăварни те час-часах пулать. Çакă вăл дисциплина çителĕксĕррине кăтартать.

Служащисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçсене туса пырас майпа кашни отдел çумне уйрăм коммуниста çирĕплетнĕ. Райсовет исполкомĕнче З. Столярова юлташ политинформацисем йĕркеллĕ иртерет. Кунта стена хаçачĕ те вăхăтра тухса тăрать.

Райсовет исполкомĕнчи пуçламĕш парторганизацинче чылай çитменлĕхсем палăраççĕ. Çавăн пекех ытти учрежденисенчи парторганизацисене те пулăшу кирлĕ. ВКП(б) райкомĕн оргинструкторски отделĕ учрежденисем çумĕнчи пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсемпе уйрăм канашлу туса иртерсен аван пулĕччĕ.

В. АНДРЕЕВ.

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе пурин те лайăх ĕçлес пулать

СЕНТЕРВАРРИ. Районра малта пыракан ял Совечĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Кушниково, Водолеево тата Ольлеево ял Совечĕсем 1-мĕш кварталти финанс планне иртерсе тултарчĕç.

Çав вăхăтрах Юртакасси, Туснаркасси, Упакасси ял Совечĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре юлса пыраççĕ. 1-мĕш квартал планне вĕсем çурри таран çеç тултарнă.

И. ОСИПОВ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ АНЛА ФРОНТРА РЕЙН ШЫВЕ УРЛА КАÇНА

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре калана тăрăх, союзниксем Рейн çинче, хăйсен Ремаген патĕнчи укрепленийĕнчен кăнтăрарахра, çĕнĕ укрепления туса хунă. Мартăн 23-мĕшĕнче, 22 сехетре, сывлăшран е артиллерирен персе хатĕрлемесĕрех, çав участокра союзниксем Рейн шывĕ урлă каçса кайнă.

Союзниксен çарĕсем Саар облаçĕнче нимĕçсем хирĕç тăрса çапăçакан уйрăм ушкăнсене пĕтерсе пыраççĕ. Кобленцпа Людвигсхафен хушшинче, Вормсран 8 миля çурçĕртерехре хирĕç тăрса çапăçакан нимĕç çарĕсене те пĕтерсе пыраççĕ.

Союзниксен çарĕсем Зигфрид линийĕн оборона сооруженийĕсене тата тепĕр участокра татнă та Рейн çывăхĕнче Эльзас чиккинчи нимĕçсен юлашки чăсĕсене хăвăрт пĕтерсе пыраççĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, америкăнецсен 3-мĕш армийĕн чăсĕсем Людвигсхафенран 13 километр кăнтăртарахра ларакан Шпейер хулине тата союзниксен 3-мĕшпе 7-мĕш армийĕсен участокĕнчи «хурантан» нимĕçсем тухса тармалли çул çинчи Ландау хулине тытса илнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, 3-мĕш армин чăсĕсем Майнц хулине тăшмантан тасатнă, 3.000 çынна тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Руртан çурçĕртерехре анлă фронтпа Рейн шывĕ урлă каçнă. Рейн шывĕн хĕвелтухăç çыранне çавăн пекех авиаци десант армийĕн малтанхи чăсĕсем аннă. Вăл операцие флот тата союзниксен авиацийĕ пулăшса тăрать. Çав операцие хутшăннă çĕр çинчи чăсем Монтгомери фельдмаршал командир пулса ертсе пыракан армисен 21-мĕш группировкине кĕреççĕ.

Наступлени умĕн авиаци калама çук аркатнă, питĕ нумай бомба пăрахнă. Союзниксен çĕр çинчи вăйĕсем, десант судисем çине ларса, тĕтĕм хупласа тăнипе тата авиаци пулăшнипе усă курса, Рейн урлă каçма пуçланă. Çак йышлă наступленире союзниксен тинĕс-çар флочĕ пали вырăн йышăнса тăнă.

Монтгомери фельдмаршалăн штабĕ официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Рейн урлă Везель, Реес тата Ксантен районĕсенче каçнă.

Штаб пĕлтернĕ тăрăх, çак ĕç питĕ ăнăçлă пулса пырать. Пысăк чăсем тата нумай хĕçпăшал Рейн урлă каçарнă та ĕнтĕ. Рейн шывĕн хĕвелтухăç çыранĕнче укрепленисем туса хунă.

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Реес хулине Везель хулине йышăннă. Везель хулинчи нимĕç гарнизонĕн командирне тыткăна илнĕ. Везель районĕнче нимĕçсен сывлăшри оборонин чăсĕсен командующийĕ пулнă Дейч генерал-майора вĕлернĕ. Рейн урлă çинчĕ тĕлте каçни çинчен пĕлтереççĕ. Союзниксем 65 миля тăршшĕнче тĕтĕм кăларса хупланипе усă курса наступлени тунă.

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калана: Неймегенран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тата Рур облаçĕнчен çурçĕртерехре Рейн шывĕ урлă каçса кайнă союзниксен çарĕсем ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ. Тăшман малтан вăйлах хирĕç тăман, халĕ вăл хаяррăн çапăçма пуçланă. Анчах та союзниксен çарĕсем хăйсен плацдармĕнче вăйлăн çирĕпленсе ларнă. Реес хулипе Динслакен хулинче çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен çарĕсем Липпе каналĕ çинчи шлюзсене тăшмантан тасатнă, çавăн пекех тата Везель, Шпеллен, Ленен, Верде, Мелеп, Овĕрбрух тата Вальзум хулисене йышăннă. Хăшпĕр тĕлте союзниксен чăсĕсем Рейн шывĕнчен хĕвелтухăçнелле 8 километр кайнă.

Пехота наступлени тума пуçличчен Рейн шывĕ хыçне аннă десант чăсĕсем хăйсем турта илмелли объектсене туртса илнĕ те çĕр çинче наступлени туса пыракан чăсемпе сахалтан та икĕ тĕлте пĕрлешнĕ. Çав десант чăсĕсене 3.100 ытла буксирлă самолетпа тата планерпа илсе пынă. Десант чăсĕсем Иссель шывĕ урлă хывнă юсавлă 6 кĕпере тытса илнĕ тата нумай çынна тыткăна илнĕ.

Союзниксен Ремаген патĕнчи укрепленийĕн çурçĕр-хĕвелтухăç секторĕнче союзниксен çарĕсем тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтернĕ тата Геннеф çывăхĕнче унăн темиçе контратакине сирсе янă. Халхи вăхăтра союзниксен Ремаген патĕнчи укрепленийĕн тăршшĕ 53 километра, урлăшĕ 16 километра çитет.

Союзниксен çарĕсем Майнцпа Ворс хулисем хушшинче хăйсен Рейн шывĕн хĕвелтухăç хĕррипчи укрепленине аслăлатаççĕ тата тĕреклетеççĕ. Тăшман вăйлах хирĕç тăман. Союзниксен çарĕсен чăсĕсем Рейн шывĕ урлă кĕпер хывнă.

Саар облаçĕнче, Рейн шывĕнчен хĕвеланăçнерехре, тăшманăн хирĕç тăракан юлашки чăсĕсене пурне те тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. Тăшман Зигфрид линийĕнчи хăшпĕр укрепленисене çеç хӳтĕлесе тăрать.

Союзниксен çарĕсем Карлсруе хулинчен çурçĕртерехре, Леймерсхейм патĕнче Рейн шывĕ патне пырса тухнă, Рейн шывĕн улăхĕнче нимĕçсен темиçе хулине тытса илнĕ.

Мартăн 23-мĕшĕнче хĕвеланăç фронтĕнче союзниксен çарĕсем 20.963 çынна тыткăна илнĕ. Мартăн 24-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ 10.000 ытла вĕçев тунă, тăшман çарĕсемпе техники пухăна-пухăна тăнă вырăнсем çине, çавăн пекех тата Базель патĕнче çапăçусем пыракан районра тăшманăн тĕреклетнĕ пункчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Тăшманăн çулйĕрĕсене, аэродромĕсене тата ытти объекчĕсене атакăланă.

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин 21-мĕш армейски ушкăнăн штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: мартăн 25-мĕшĕнче Монтгомери фельдмаршалăн çарĕсем Рейн шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче 40—48 километр тăршшĕ фронтра тĕреклеленсе ларнă. Çав укрепленин урлăшĕ хăшпĕр тĕлте 10 километра çитет. Çав чăсем десант армийĕсемпе пĕрлешнĕ те халĕ малалла куçса пыраççĕ. Союзниксен çарĕсем тытса илнĕ плацдармсем халь пĕртăтăш укреплени пулса тăнă.

Гитлеровецсем чеелешни

ГЕРМАНИРИ ЧЕРЕ «ВИЛЕСЕМ»

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат гитлеровецсен çĕнĕ чеелĕхĕ çинчен, вĕсем вилнĕ пек пулса çухални çинчен пĕлтерет. СС çарĕсен полковникĕ Олаф Фикерт нимĕç хаçачĕсенче хăйĕн некрологне пичетлесе кăларнă пулнă. Телĕр 4 эрнерен ăна, Вильгельм Клейнерт ятне илнĕскерне, Барселона урамĕсем тăрăх уткаласа çӳренине курнă. Гитлерла çамрăксен штабĕн начальникĕ Гельмут Меккель çинчен—«вăл ăнсăртран вилсе кайнă» тесе пĕлтернĕ, анчах çавăн хыççăн ăна Испани студенчĕсен-фашисчĕсен пуçлăхĕпе Альварес Серранопа пĕрле курнă. Лей помощникне, Роберт Лейтнер текенскере, январĕн 26-мĕшĕнче государство шучĕпе чаплăн пытарнă пулнă. Ăна пытарнă çĕрте нацистсен паллă сановникĕсем тата çар чинĕсем пулнă. Анчах Лейтнер халĕ те чĕрĕ. Германире вăл Георг Хаяауэр ячĕпе пурăнать. Эсесовецсен Карл Дуфайс, Ганс Штейдеманн тата Эрнст Фрик ятлă пуçлăхĕсем çинчен те вĕсем «вилнĕ» тесе пĕлтернĕ пулнă. Халĕ паллă пулнă тăрăх, вĕсем урăх ятпа Буэнос-Айресра (Аргентинăра) пурăнаççĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ÇАРАТСА ПУХНА ХАКЛА ЯПАЛАСЕНЕ ИСПАНИРЕ ПЫТАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Спэниш Ньюс Леттер» бюллетень çапла çырать: Лондона çитнĕ хыпарсем тăрăх, нимĕç самолечĕсем, союзниксен авиацийĕн паллисене сăрласа лартса, эрнере виçĕ хут Германирен Испание вĕçĕ-вĕçе каяççĕ. «Çав самолетсем,—пĕлтерет бюллетень,—испанецсен çар аэродромĕсем çине анаççĕ. Çавăн пек аэродромсенчен пĕри—Сарагосса хулинче. Самолетсем Швейцари, Австри тата Çурçĕр Итали урлă, унтан Вăтаçĕр тинĕс урлă вĕçсе, Испание çитеççĕ. Çав самолетсемпе нацистла лидерсен хаклă йышши япалисене илсе кайни çинчен пĕлтереççĕ».

ИТАЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ АЛБАНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ НОТА ЯНА

ПАРИЖ, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Итали правительстви Албани правительстви патне нота янă. Çав нотăра Итали правительстви Албанин никама пăхăнманлăхне йышăнни çинчен тата унпала дипломатиллĕ çыхăну тытма шутлани çинчен пĕлтернĕ.

РИМРИ ФАШИСТСЕН ВЫСТУПЛЕНИЙĔ

РИМ, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 23-мĕшĕнче 30 фашист Римра Порте Пиа площадĕнче пухăннă та Муссолини ячĕпе демонстраци тунă. Вĕсен çывăхĕнчен иртсе кайнă машинăсем фашистла паллăллă листовкăсем сапаласа пăрахнă. Çав фашистла выступлениие хирĕç нимĕнле мера та йышăнман.

ИВОДЗИМА УТРАВĔНЕ ÇУХАТНИ ÇИНЧЕН КОЙСО КАЛАСА ПАНИ

ТОКИО, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 21-мĕшĕнче Койсо премьер-министр радиопа сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Иводзима утравĕнчи вăрçă лару-тăрăвĕ çинчен çапла каланă: мартăн 17-мĕшĕнчи çурçĕрте çав утрав çинчи гарнизон американецсен йышлăрах вăйĕсене юлашки хут атакăланă, Койсо каланă тăрăх, Япони Иводзима утравне çухатни Лăпкă океан çинчи вăрçăра паллă вырăн йышăнса тăрать. Вăрçă ĕçĕсем Япони патне çывхарнăçемĕн, тенĕ Койсо, лару-тăру пирĕншĕн йывăрлансах пырĕ. Анчах та, тенĕ вăл, тăшманпа килĕшесси çинчен сăмах та пулма пултараймасть.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ НАГОЯ ХУЛИНЕ ТАПАННА

САН-ФРАНЦИСКО, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн 21-мĕш авиасоединенийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Б—29» йышши хăватлăрах хăватлă 225 бомбардировщик, Мариан утравĕсем çинчен вĕçсе тухса, Японин авиаци промышленноçĕн центрне—Нагоя хулине пырса тапаннă. Самолетсем, зажиганах вĕçсе пырса, Мицубиси авиаци заводĕсем çине темиçе çĕр фугаслă бомба пăрахнă. Заводсене тапăннă чухне сантатăк лайăх тунă.

ТОКИО, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Японин император ставки çапла пĕлтерет: мартăн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Америкăн «Б—29» йышши хăватлăран хăватлă бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Нагоя хулине тапăннă, вĕсем вут тивертекен тата фугаслă бомбăсем пăрахнă, хăшпĕр районсенче пушарсем тухнă, сунсем ишĕлнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

АВИАЦИ РЕЙН ШЫВЕ УРЛА КАÇАС ĔÇЕ ХУТШАННИ

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 23-мĕшĕнче американецсен 1.250 йывăр бомбардировщикĕ ытла, 350 истребитель ытла хӳтĕлесе пынипе, Рур облаçĕнчи тата унăн çывăхĕнчи чугун çулăн 11 деповне тапăннă.

Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, «Ланкастер» йышши бомбардировщиксем, 10 тонна таякан тата ытти йывăр бомбăсем тиесе кайса, Бремен хулинчи чугун çул кĕперне тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 1.050 йывăр бомбардировщикĕ нимĕçсен Руртан çурçĕртерехри 12 аэродромне тапăннă. Бомбардировщиксене 850 истребитель ытла хӳтĕлесе пынă.

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем татах Берлина тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: союзниксен авиацийĕ çĕр çинчи çарсем наступлени пуçлас умĕн 5 кун хушши—мартăн 19-мĕшĕнчен пуçласа 24-мĕшне çитиччен—сывлăшра наступлени туса пынă. 56.000 вĕçев тунă, 50.000 тонна бомба пăрахнă, нимĕçсен 450 самолетне пĕтерсе тăкнă, 400 самолетне сиенленĕ. Союзниксен авиацийĕ тăшманăн 5.766 машинине, 14.450 чугун çул вагонне, 1.005 паровозне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, тăшманăн чугун çулĕсене 1.032 тĕлте сиенленĕ.

РУМЫНИ ПРАВИТЕЛЬСТТВИН ДЕКЛАРАЦИЙĔ

БУХАРЕСТ, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Çĕр реформи çинчен йышăннă закон пирки правительство декларацине пичетлесе кăларнă. Декларацире çапла каланă:

1945 çулхи мартăн 20-мĕшĕнче пулнă ларура правительство çĕр реформи çинчен калакан закона ырланă.

Наци пурнăçĕнче питĕ паллă вырăн йышăнса тăракан пĕрремĕш ĕç хыççăн (Çурçĕр Трансильванине хамăр çĕршывпа пĕрлештернĕ хыççăн) демократиллĕ пĕрлешӳвĕн правительстви историллĕ иккĕмĕш ĕçе—хресченсене çĕр валеçсе парассине пурнăça кĕртет.

Çапла вара, Румыни халăхĕн историне иккĕмĕш аслă страница çырса хунă.

Çĕр реформине иртермелли закона çирĕплетнипе, çĕршыв правительстви пирĕн хресченсен чи хĕрӳллĕ ĕмĕтне—хăйсем ĕçлесе тăракан çĕр çинче хăйсем хуçа пулса тăрассине пурнăçлать. Çĕр реформине пула, уйрăм хресчен хуçалăхĕсем çирĕпленеççĕ, вак тата вăтам хресчен хуçалăхĕсем чечекленсе ӳсес çул çине тухаççĕ.

Хресченсен чĕрĕ вăйĕсене тата пĕтĕм Румыни халăхĕн вăйĕсене мобилизацилени, не пула, пирĕн хресченсемшĕн çĕнĕ те анлă çулйĕр уçăлать. Çĕрсĕр пурăннă е сахал çĕрпе пурăннă хресченсем çĕр илĕç. Паллах ĕнтĕ, чи малтан салтак тумтирне тăхăнса гитлерла Германие хирĕç çапăçакан хресченсене çĕр памалла пулать.

Çĕр реформине туса иртернине пула, хресченсем çеç мар, пĕтĕм Румыни халăхĕ çĕнĕ çул çине тухать. Ку вăл тулăхлă пурнăçан, ăнăçлă ĕçĕн тата ирĕклĕ демократиллĕ Румынин телейлĕ пуласлăхĕн çулĕ пулса тăрать.

Çĕр реформи çинчен калакан закона унăн величестви I Михай король çирĕплетнĕ. Пĕтĕм çĕршыва çакăн çинчен пĕлтерсе, правительство вăл закона халех ĕçе кĕртме шутлани çинчен пĕлтерет. Кăçалхи çуркунне хресченсем хăйсен хирĕсенче ĕçлĕç.

ВЕНГРИРЕ ФАШИСТЛА ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ САЛАТСА ЯНĂ

ДЕБРЕЦЕН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрин Вăхăтлăх Правительстви, Халăх Пухăвĕнчен илнĕ полномочи тăрăх, перемири килĕшĕвĕн пĕр пунктне пурнăça кĕртес шутпа фашистсен политикăллă тата çар организацийĕсене пурне те салатса ярасси çинчен постановлени йышăннă. Çав организацисен пурлăхне, укçи-тенкине тата докуменчĕсене тытса илеççĕ, вăл япаласене муниципалитетсен сыхласа тăмалла. Салатса янă организацисен ĕçне тепĕр хут тытăнма хăтланакан е çавăн йышши организацисем çĕнĕрен тума хăтланакан çынсене, преступниксем тесе шутласа, суд умне тăратмалла.

Пирĕн район республика юбилейне мĕнле хатĕрленет

Чăваш халăхĕн пурнăçĕнчи чаплă куна—республика 25 çул тултарнине эпир ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе, промысла комбиначĕ, апат-çимĕç комбиначĕ тата артельсен коллективĕсем хăйсен çурçулхи планĕсене иртерсе тултарнипе, колхозсем çуракине тĕплĕн хатĕрленсе лайăх иртернипе кĕтсе илме тивĕçлĕ. Ĕçе кирлĕ пек тытăнсан, паллах, çак задачăсене эпир ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пултаратпăр. Район центрĕпе ялсене илемлетсе, культурăллă сăн-сăпат кĕртес тĕлĕшпе тумалли мероприятисене палăртса хунă ĕнтĕ. Халь районри колхозсенче колхозниксен пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Вĕсенче Чăваш Автономийĕ 25 çул тултарнине кĕтсе илсе хатĕрленесси çинчен сӳтсе-яваççĕ. Çавна май колхозниксем ялсене илемлетес, общественăллă вылăх-чĕрлĕх валли çурт-йĕрсем тăвас тата культурăпа çутĕç учрежденийĕсен çурчĕсене юсаса йĕркене кĕртес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртаççĕ.

Шăхасанти «Красный Октябрь» колхоз членĕсем республика 25 çул тултарнă тĕле колхоз клубĕпе шыв арманне юсаса çитерме йышăннă. Сительти «Победа» колхоз членĕсем общественăллă вылăх-чĕрлĕх валли çĕнĕ вите лартма, колхоз клубне юсаса йĕркелеме хатĕрленеççĕ. Тăрăнти «Красный партизан» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем хăйсен пухăвĕнче, республика 25 çул тултарнă кун тĕлне çĕнĕ клуб лартма, çав чаплă кун ячĕпе иртекен савăнăçлă ларăва çĕнĕ клубра иртерме обязательство илчĕç. Ильич ячĕпе тăракан колхоз членĕсем юбилей тĕлне 120 ача вырнаçмалăх шкул çурчĕ туса пĕтерме шутлаççĕ.

Республика 25 çул тултарнине кĕтсе илес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем пирĕн нумай-ха. Эпир юбилей ячĕпе районри колхозсенче 26 çурт çĕнĕрен тума тата юсаса йĕркене кĕртме палăртнă. Вăл шутран юрăхсăра тухнă шыв арманне юсаса ĕçе ямалла, икĕ шыв арманне тĕплĕн юсамалла, колхозсенчи общественăллă вылăх-чĕрлĕхсем валли çĕнĕрен 7 вите лартмалла, икĕ шкул çурчĕ тумалла, вулав çурчĕсемпе клубсене, ялсенчи медицина, ветеринари учрежденийĕсен çурчĕсене юсаса йĕркелемелле тата ытти те.

Район центрĕнче электростанци туса пĕтерме ĕмĕтленетпĕр. Ку тĕлĕшпе ĕçе тытăннă та ĕнтĕ. Строительство валли кирлĕ йывăçа касса хатĕрленĕ, чылай пайне турттарса тухнă. Кунсăр пуçне Калинин ячĕпе тăракан, Молотов ячĕпе тăракан, «Активист», «Красный партизан», «Новая жизнь» тата «Прожектор» колхозсем хăйсен вăйĕпе Кĕçĕн Çавал шывĕ çине тепĕр электростанци лартма хатĕрленеççĕ. Çав электростанцие вĕсем Октябрь революци 28 çул тултарнă тĕле туса пĕтерсе, ĕçе яма шутлаççĕ. Çак икĕ электростанцие туса пĕтерсен вĕсем район центрĕпе 11 колхоза энерги пама пултараççĕ.

Ногински районри колхозниксен паха пуçарăвне ырласа, районри колхозниксем МТС валли çĕнĕрен мастерской, клуб, тимĕрçĕ лаççи тума, нефтебазăра сарай лартма йышăнчĕç.

Вăхăт нумай юлмарĕ. Ĕçе тивĕçлипе организацилемесен, çине тăрса ĕçлемесен палăртнă ĕçсем кая юлма пултараççĕ.

Пирĕн районри ялсенче юбилея мĕнле хатĕрленеççĕ-ха? Атнашри Киров ячĕпе тăракан, Çĕнĕ Мамири Ворошилов ячĕпе тăракан, Уйкас Кипекри «Гвардеец», Куйбышев ячĕпе тăракан, Анат Юнтапари Молотов ячĕпе тăракан, Çĕнĕ Пинерти «Пинер» колхозсен членĕсем çуркунне кашни колхозник хуçалăхĕнче 10 тĕпрен кая мар йывăç лартса хăварма, вĕсене лайăх пăхса ӳстерме йышăнчĕç. Вĕсен паха пуçарăвне районри ытти колхозсенче те хулли кăмăлпа йышăнаççĕ. Çапла вара, кăçалхи çуркунне кашни колхозникĕн кил вырăнĕнче 10-шар тĕп улмуççипе çырла йывăççисем лартмалла, кунсăр пуçне общественăллă çуртйĕрсем çывăхĕнче 2000 ытла тĕрлĕ йывăççем лартмалла. Çакăнпа пĕрлех, колхозсенче 5 гектар ытла сад тумалла, 3 гектар çинче тĕрлĕ çырла йывăççисем лартса ӳстермелле.

Районри çуртйĕрсене юсама тата çĕнĕрен тума 1500 кубометр ытла йывăç кирлĕ пулать. Паянхи куна район валли йывăç материалĕсем нимĕн чухлĕ те уйăрса паман-ха.

Пирĕн кашниннех юбилея лайăх хатĕрленсе кĕтсе илессишĕн кĕрешмелле. Анчах Шăхасанти «Сталь», Ямашри «Стахановец» промартельсем республика уявĕ ячĕпе пуçарса янă социализмлă ăмăртăва кирлĕ пек хутшăнман-ха. Вĕсем уйăхри плансене пурнăçа кĕртсе пымаççĕ.

Юбилея хатĕрленес тĕлĕшпе хăшпĕр колхозсенче те ĕçе тивĕçлипе тытăнманха. Матьшӳри «Молодой колхозник» ялхуçалăх артель членĕсем юбилей тĕлне çĕнĕ шкул лартма йышăннă. Анчах йышăннă решение пурнăçлас тĕлĕшпе колхоз руководителĕсем нимех те туман-ха.

Иртнĕ çулсенче пирĕн Шăхасан районĕ тырпул начар мар туса илчĕ. Кăçал татах та вăйлăрах тырпул, пахча-çимĕç туса илессишĕн пирĕн ытларах вăй хурса ĕçлес пулать.

Политпросвет учрежденийĕсем, вырăнти радио юбилея хатĕрленес ĕçе çителĕксĕр хутшăннă. Районри радиоузел хăйĕн юлашки хыпарĕсен кăларăмĕсенче юбилея хатĕрленесси çинчен нимĕн те шарламасть.

Вырăнсенчи партипе совет организацийĕсем, хăйсен активĕпе пĕрле, юбилея хатĕрленес ĕçĕн организаторĕсем пулса тăма тивĕçлĕ.

К. МЕДЯНИН,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕ Хусанти саслă кино механикĕсен курсне вĕренме ярать. Курсра 4 уйăх вĕренмелле. Вĕрентме апрелĕн 5-мĕшĕнче пуçлаççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Звуковой кинотеатр, отдел кадров управления кинофикации. 3—2

Чебторга çакăн пек работниксем кирлĕ: хатĕрлев отделĕн начальникĕн заместителĕ, хатĕрлев инспекторĕ, хатĕрлев агенчĕсем иккĕ, экспедитор тата кладовщиксем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, Отдел кадров.

Шупашкарти эрех заводне çакăн пек работниксем кирлĕ: тонна çурă тиекен грузовик шоферĕ, нефть двигателĕпе ĕçлекен буксир катерĕн мотористĕ, тимĕрçĕ, охранниксем. Пурне те столовăйра апатлантараççĕ, пĕччен пурăнаканнисене общежитие вырнаçтараççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чувашская 65, Ликеро-водочный завод. 2—1.

Чăвашсен селекци станцине главнăй бухгалтер, пурлăх бухгалтерĕ, элита складĕн заведующийĕ, тимĕрçĕ, трактористсем, комбайнерсем тата рабочисем кирлĕ. Работниксене хваттер параççĕ, столовăйра апатлантараççĕ, пахча участокĕсем параççĕ. Çул уйăхне ĕç законĕсен кодексĕнче кăтартнă тăрăх тӳлеççĕ, ĕçукçине тата хушса паракан паека—килĕшсе татăлнă тăрăх параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Мамино, Цивильского района (от станции Цивильск 5 километров).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—28, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00298 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000